25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
9
КĔÇНЕРНИКУН
158 (6093) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ÇĔРШЫВĂН ЧИ ЛАЙĂХ ÇЫННИСЕНЕ—ПАРТИ РЕТНЕ

Фронтсенче паттăррăн кĕрешекен красноармеецсемпе командирсем парти ретне илме ыйтса çырнă заявленисем çар чаçĕсенчи парторганизацисене пин-пин пыраççĕ. Тăшман тылĕнче, партизансен отрячĕсенче кĕрешнĕ çĕрте те совет çыннисем большевиксен парти ретне кĕреççĕ. Çак кĕрешÿре вĕсене большевиксен партийĕ вăй-хал парса пынине совет çыннисем лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Совет тылĕнче парти организацийĕсем ÿсеççĕ, парти ретне çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем кĕреççĕ. Кăçал малтанхи çур çулта пирĕн Чăваш республикинчи парторганизацинче ВКП(б) членĕн кандидатне илнисен йышĕ 1941 çулти малтанхи çур çулта илнисен йышĕнчен икĕ хута яхăн пысăкрах пулнă. Парти ретне стахановецсем кĕреççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра ĕç нормине 300-шер процент тултарса пыракан стахановец-кровельщиксем В. Хоменко тата Н. Чуканов юлташсем ВКП(б) членĕн кандидатне кĕнĕ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозри пуçламĕш парторганизаци нумаях пулмасть Закир Сабирзянова — ВКП(б) членне, Сибай Галеевпа Хабир Ганеева—ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Вĕсем пурте, производствăра тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, агитациллĕ-массăллă ĕçе те çине тăрса туса пыраççĕ, партипе правительство мероприятийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе активлă ĕçлеççĕ.

Парторганизацисем нумайĕшĕ ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлесе пыраççĕ. Çакăн пек парторганизацисенче коммунистсен йышĕ ÿссех пырать. Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр тата Вăрмар районĕсенче парти ретне илес ĕçе начар мар организациленĕ.

Çавăнпа пĕрлех парти ретне илессипе çителĕксĕр ĕçлекен парторганизацисем те сахал мар. ВКП(б) Первомайски райкомĕ кăçал парти ретне пĕтĕмпе те 6 çын кăна илнĕ. Партин хăшпĕр райкомĕсемпе пуçламĕш организацийĕсем ВКП(б) ретне илес ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ, ку ыйтупа решенисем йышăнаççĕ те лăпланса лараççĕ. ВКП(б) Елчĕк райкомĕ партие çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен кашни пленумрах сÿтсе-явать, кашнинчех решени йышăнать. Анчах çак ĕç Елчĕк районĕнче лайăх пырать тесе калама çук. Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшĕнчен районĕпе ВКП(б) членне 4 çын, ВКП(б) членĕн кандидатне 4 çын илнĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 15-мĕшĕнчен 3 член тата 9 кандидат илнĕ. Районри промышленность предприятийĕсенче парторганизацисем çук. Унтан та ытларах, юлашки çур çул хушшинче ялсенчи пуçламĕш парторганизацисен хисепĕ те сахалланнă. Кăçалхи январĕн 4-мĕшĕнче, апрелĕн 12-мĕшĕнче тата июнĕн 16-мĕшĕнче пулнă пленумсен решенийĕсенче Уразметево ялсоветĕнчи пуçламĕш парторганизаци партие илессипе нимĕн те туманнине палăртнă. Анчах унта ĕç лайăхланман, çулталăк хушшинче те пĕр çынна та парти ретне илни пулман. Пленум решени йышăнса хăварнă пулсан, пуçламĕш парторганизацин çав решение пурнăçа кĕртме тăрăшмалла, райком работникĕсен ăна çав ĕçре пулăшмалла. Анчах Елчĕкре ун пек туман. Çавна пула Уразметеври пуçламĕш организацире партине илес ĕç лайăхланман.

ВКП(б) ретне çĕршывăн чи лайăх çыннисене, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра çĕнтерÿ тăвассишĕн, фронта валли хĕçпăшал, апат-çимĕç нумайрах туса парассишĕн хăйсене шеллемесĕр хастарлă ĕçлекен совет патриочĕсене илеççĕ. Анчах ВЛКСМ Елчĕк райкомĕ парти ретне кĕме комсомолецсене рекомендаци парасси çине питех те çăмăллăн пăхать. ВЛКСМ Елчĕк райкомĕ Çирĕклĕ Шăхальри комсомолеца Ф. И. Денисова партие кĕме рекомендаци панă. Денисова ВКП(б) членĕн кандидатне илес ыйтăва парти райкомĕнче пăхса тухнă чухне çакă палăрнă: вăл колхоз счетоводĕсен тата вылăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсен курсĕсенчен вĕренсе тухнă. Апла пулсан та вăл кăçалхи март уйăхĕнчен пуçласа колхозра пĕр ĕçкунĕ те туман. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек çынсем парти ретĕнче тăма тивĕçлĕ мар.

Çамрăк коммунистсем, уйрăмах кандидатсем хушшинчи ĕçе вăйлатма кирлĕ. Кандидатсене ВКП(б) членне кĕме хатĕрленсе çитмешкĕн пулăшас пулать. Анчах уйрăм пуçламĕш парторганизацисенче çак задачăна тĕрĕс мар ăнланаççĕ. Елчĕк районĕнчи Лаш-Таябари кандидатсен группи çапла решени йышăннă: «Кандидат стажĕ тухнă ВКП(б) членĕн кандидатне Иван Ильин юлташа кандидатран члена куçма хатĕрленсе çитме хушас», тенĕ. Çак решени тĕрĕс мар: кандидатран «куçармаççĕ», ВКП(б) членне илеççĕ; Ильин юлташăн парторганизаци хушмасăрах члена кĕме хатĕрленсе çитме тăрăшмалли ахалех паллă, çакă вăл — унăн тĕп тĕллевĕ пулса тăрать. Кандидатсем хушшинче ĕçлесси çине çавăн пек формально пăхма юрамасть. Вĕсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăх йĕркелесе ярас пулать, вĕсене парти организацийĕсем енчен ĕçсем хушса парти ĕçне тума вĕрентсе пымалла, ВКП(б) членне илме хатĕрлемелле.

Парти ретне кĕме ыйтса çырнă заявленисене ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисенче вăраха ямасăр пăхса тухмалла, партие илнисене кандидат карточкисемпе парти билечĕсене вăхăтра памалла.

Парти ретне илес ĕçе вăйлатасси партире тăман актив хушшинче куллен кунах ĕçленинчен, партиллĕ-политикăллă ĕçе тăтăшах туса пынинчен килет. Çакна асра тытса актив хушшинчи политикăллă ĕçе лайăхлатмалла.

ВКП(б) ретне кĕрес текенсене кашнине уйрăммăн суйласа илмелле. ВКП(б) ретĕнче мĕншур вăй-хала хурса ĕçleме тăрăшакансем, дисциплинăна çирĕп тытса пыракансем пулччăр. Партие кĕнĕ çĕнĕ çынсене кулленхи практикăллă ĕçе хутшăнтармалла, парти ĕçне туса пыма вĕрентмелле.

Парти организацийĕ ÿссе пыни пирĕн умра тăракан çавтери пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 7-мĕшĕнче Воронежран хĕвеланăç еннерех тата **Старый Осколран** кăнтăр-хĕвеланăç енчи вырăнсенче хаяр çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен темиçе вуншар танкне, войсксемпе грузсем турттарса пыракан 75 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 46 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 4 дивизионне тата уйрăм батарейăна пусарса лартнă, чугунçул çинчи виçĕ состава çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр полка çити тата утлă çарăн 2 эскадронне саралаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старый Осколран кăнтăр-хĕвеланăç еннерех вырăнта противникăн пехотипе танковăй войскисене хирĕç вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем атакăна 200 танка яхăн тата пехотăна чылай йышлăн кĕртсе янă. Артиллеристсемпе минометчиксем, бронебойщиксемпе танкистсем гитлеровецсене çирĕп тăрса кĕтсе илнĕ, нимĕçсен 80 танкне çĕмĕрнĕ. Противникăн пехоти те çавăн пекех питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ. Пирĕн боецсем гитлеровецсене пулеметсемпе автоматсенчен тата винтовкăсенчен тÿрремĕнех тĕллесе пересе пăрахнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе çĕршер çынна пĕтерсе тăкса, пирĕн часĕсем оборона тумалли малтанах хатĕрлесе хунă çĕнĕ рубежсем çине чакнă.

* * *

Воронежран хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче пирĕн танковăй часть противникăн пысăк вăйĕсем кĕсе килнине чарса тăрать. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче 700 гитлеровеца, нимĕçсен 14 танкне, танксене хирĕç пемелли 6 орудине, 7 автомашинине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе пехотинецсем хыçалти пулăнакан пункта противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснинчен икĕ кун хушши хÿтĕлесе тăнă. Ял патне пымалли вырăнсенче гитлеровецсен, вилнисене шутласан кăна та, 1000 салтакпа офицерĕ ытла пĕтнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен артиллеристсем противника пысăк сиен кÿреççĕ. Шишкин лейтенантăн батарейине нимĕçсем çавăрса илсе пĕтерсе тăкма хăтланнă. Гитлеровецсем батарейăна 7 хутчен атакăланă, анчах кашнинчех пысăк çухатусем тÿссе каялла вăркăннă. Çав çапăçура противникăн пехоти пĕр батальон ытла пĕтнĕ, 2 оруди, пулеметсемпе автоматсем, винтовкăсемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн часть (Ленинград фрончĕ) икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 8 дзочĕпе блиндажне, 2 наблюдательнăй пунктне, танксене хирĕç пемелли орудине тата 2 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Тыткăна илнисем пур. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çынна çити вилсе пĕтнĕ.

* * *

Противникăн 2 роти пирĕн подразделение, Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пĕр высотана йышăннăскере, хĕссе кăларма хăтланнă. Пирĕн боецсем вăйлăн персе кĕтсе илнипе гитлеровецсем каялла чакнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем çавăнта 100 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Епифанов юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем тăшманăн 75 миллиметрлă орудийĕсен батарейине пусарса лартнă, 2 блиндажа çĕмĕрнĕ, темиçе автомашинăна тата 70 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ковзел лейтенант ертсе пыракан зенитчиксен подразделенийĕ противникăн транспортнăй йывăр самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Партизансен В. тата Г. юлташсем командир пулса ертсе пыракан темиçе отрячĕ, Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекенскерсем, июнь уйăхĕнчи 25 кун хушшинче 150 оккупанта вĕлерсе пĕтернĕ, çар грузĕ тиенĕ 2 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 7 лава пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсенчен трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен танковăй дивизийĕнчи унтер-офицер Ганс Зигерт, Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Хĕвелтухăç фронтĕнче эпĕ вăрçă пуçланнăранпах тăратăп. Поход пуçланнă чухне пирĕн ротăра 220 çын пурччĕ. Пĕр çулталăк хушшинче ăна 9 хутчен йыш хушса пачĕç, анчах çапах та халĕ ротăра 100 салтак çеç шутланать. Манăн взводра 48 салтакран виççĕшĕ кăна чĕрĕ тăрса юлчĕç: вĕсем—фельдфебель Отто тата икĕ ефрейтор. Вĕсенчен пĕри нумаях пулмасть хамăр хушăра çапла каларĕ: «Вăрçă татах та вăраха пырсан, эпĕ винтовкăна пăрахатăп та вырăссем енне каçатăп», терĕ. Çак кунсенче манпа пĕрле службăра тăнă обер-ефрейтор Кюнрих командировкăран таврăнчĕ. Вăл Германире пулнă, хăйĕн тăван кĕтесне кайса килнĕ. Кюнрих питĕ тарăхса таврăнчĕ. Вăл тылра çавтери ирсĕр ĕçсем пулса пыни çинчен, эсэсовецсем салтаксен арăмĕсенчен мăшкăллани çинчен тата пур çĕрте те вăрлани çинчен пĕлтерчĕ. Эпир фронтра асапланатпăр, вĕсем вара вăрçăпа пуяççĕ».

* * *

Германири руда кăларакан сăрт-ту промышленноçĕнчи рабочисем хушшинче саботажсемпе диверсиллĕ ĕçсем тăвасси питĕ ÿссе кайнă. Аахен патĕнчи рудникра ĕçлекен шахтерсем çĕр айĕнчи чугунçул çинче кăмрăк турттарса пыракан поезда сирпĕнтерсе янă. Ĕç виçĕ талăк хушши чарăнса тăнă.

Июлĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронежран** хĕвеланăçнерех тата **Старый Осколран** кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнсенче çапăçнă.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çав енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен йышлă вăйĕсем пирĕн танксен подразделенийĕ хÿтĕлекен высотана йышăнса илме хăтланнă. Танкистсем нимĕçсене пырса çапнине çирĕп тăрса кĕтсе илнĕ. Старши лейтенант Салюков экипажĕ, темиçе хут персе ярса, нимĕçсен пĕр танкне çĕмĕрнĕ, 2 йывăр орудине пĕтерсе тăкнă. Пĕр танк çинче Баклогов лейтенант, башеннăй стрелок Трущак тата механик-водитель старши сержант Медведев ларса пынă; çак экипаж 4 оруди пĕтерсе тăкнă тата 50 гитлеровеца вĕлернĕ. Высотапăн пынă çапăçура противникăн çĕршер салтакĕпе офицерĕ вилсе выртнă.

* * *

Старый Осколран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри участокра противник питех те пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăр, çаплах малалла талпăнать, çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе ярать. Пĕр пунктра нимĕçсен 30 танкĕ тата пĕр полк ытла пехоти авиаци пулăшнипе атакăна кайнă. Пирĕн артиллеристсем гитлеровецсем çине вăйлăн персе тăнă, нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Артиллери вучĕпе хÿтĕленсе çапăçăва пирĕн йывăр танксемпе пехотинецсем кĕрсе кайнă. Хирĕç пырса çапса, вĕсем противника хăйĕн малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 700 вилли ытла выртса юлнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра, противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе, пирĕн часть çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Çапăçура нимĕçсен 9 танкне çĕмĕрнĕ тата 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн 2 роти кĕçĕн лейтенант Трапезниковăн взводне çавăрса илнĕ. Пирĕн боецсем атакăлакан гитлеровецсене пулеметсемпе винтовкăсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. 100 çын ытла çухатсан, нимĕçсен каялла кайма тивнĕ.

* * *

Оруди командирĕ Шехтер юлташ нимĕçсен наступлени тăвакан пехотине сывăха янă та, тÿррĕн тĕллесе персе, противникăн 50 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Шехтер юлташ икĕ хут аманнă пулнă, анчах та вăл противникăн атакине сирсе яриччченех персе тăнă.

* * *

Красноармеец Сухов юлташ винтовкăран тĕл персе нимĕç пулемечĕн расчетне пĕтерсе тăкнă. Çав пулемета тытса илсе, Сухов юлташ унпа пеме тытăннă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тата 15 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен А. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ хăй çапăçма пуçланăранпа нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 580 çынна пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе çыхăнса кĕрешсе партизансем 450 гитлеровеца вĕлернĕ. Совет патриочĕсем противникăн 5 çар эшелонне крушени тунă, чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă, телефон çыхăнăвне 80 километр тăршшĕнче пăсса хунă.

* * *

Аялархра вилнĕ нимĕç обер-лейтенанчĕн Гольцăн дневникĕнчен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«1942 çулти январĕн 11-мĕшĕнче Данирен хĕвелтухăç фронтне тухса кайрăмăр.

Январĕн 22-мĕш. Пирĕн 323-мĕш пехотнăй полк Великие Луки станцинче поезд çинчен анчĕ те çапăçма тытăнчĕ.

Февралĕн 16-мĕш. Вилнисене кăна шутласан та, пирĕн 750 çын пĕтнĕ.

Февралĕн 20-мĕш. 2-мĕш батальона татса илнĕ, 10-мĕш ротăри çынсен çурри пĕтнĕ.

Февралĕн 23-мĕш. Батальона çапса аркатнă. Нумай юлташсем пĕтрĕç. Мотц полковникпа Лютце лейтенант тата 85 рядовой çеç шăтарса тухса çăлăннă, вĕсен куçĕсенче куççуль. 323-мĕш полкри 2-мĕш батальонăн командирне граф Кийзерлинга вĕлернĕ. 14-мĕш ротăн командирĕ Мюллер вилнĕ. Вилнисем 396 çын, пĕр хывăрсăр çухалнисемпе пĕрле шутласан — çухату 600 çын ытла пулать.

Мартăн 6-мĕш. Наступлени пăчланса ларчĕ. Вырăссем хастарлăн çапăçрĕç, вĕсен ĕçĕ ăнчĕ.

Майăн 10-мĕш. Вырăссем чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă. Бронепоезд ÿпĕнсе кайнă.

Июнĕн 20-мĕш. Партизансем опорнăй пункта атакăланă. Пирĕнне 60 çынна вĕлернĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Витебск хулинчи мирлĕ çынсене калама çук тискеррĕн тыткалаççĕ. Хулара кашни кунах темиçе вуншар çын вырăнпа вилет. Июнĕн 23-мĕшĕнче оккупациллĕ влаçсем 17 çынна, çав хушăра 4 хĕрарăма çакса вĕлернĕ, вĕсене куларан яла çÿрĕлми илме пропусксăр кайма хăтланнăшăн çеç çакса вĕлернĕ. Нумаях пулмасть Витебскра, пĕр нимĕç офицерне вĕлернĕ. Гитлеровецсем вара çынсене массăллăн хупăрла-хупăрла илнĕ, хулари 100 çынна персе вĕлернĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Боснире (Югославия) партизансем нимĕçсемпе итальянецсен захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Партизансем жандармерин пысăк отрячĕсене аркатса тăкнă. Италин партизансене хирĕç кĕрешме янă икĕ альпийски дивизийĕн те ĕçĕсем питех те ăнăçман. Июнь уйăхĕнче çав дивизисен 1.800 çын вилнĕ тата аманнă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Калинин фрончĕ). **Ÿкерчĕк çинче:** Кузьмин юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардеец-автоматчиксем гитлеровецсенчен чугунçул участокне туртса илеççĕ.
Ф. ЧЕРНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Украинăри партизансен боевой ĕçĕсем

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, июлĕн 6-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нумаях пулмасть халăх пурăнакан 2 пункта нимĕçсенчен тытса илсе ирĕке кăларнă. Çав операцие тунă чухне темиçе салтака тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

Партизансен Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан тепĕр отрячĕ фашистсен 40 салтакне тата темиçе полицейскипе офицера пĕтерсе тăкнă. Юлашки кунсенче çав отряд 3 кĕпере тата противникăн 8 автомашинине сирпĕнтерсе янă.

Тăшманăн танксем, автомашинăсем тата войскăсем турттарса пыракан икĕ эшелонĕ фронт патне пынине пĕлсен, партизансен пĕр отрядĕнчи разведчиксем чугунçул çине темиçе тĕлте минăсем хунă. Икĕ эшелонĕ те ÿпĕнсе кайнă.

Фашистла мерзавецсем Медники ялĕнче тунă тискер кайăкла ĕçсем

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, июлĕн 7-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем оккупациленĕ районсенче тискер кайăкла хăрушă ĕçсем тăваççĕ, нимĕн айăпсăр совет гражданĕсене вĕлереççĕ. Калинин облаçĕнчи Локнянски районри Медники ялĕнче гитлеровецсем мирлĕ халăха çавтери тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Колхозниксем çавăн çинчен акт çырнă.

Ку ĕç вăл нумаях пулмасть пулса иртнĕ. Яла нимĕçсен 50—60 çынран тăракан карательнăй отрячĕ пырса кĕнĕ. Гитлерла вăрă-хурахсем халăха площаде пухăнма приказ панă, хăйсем вара килĕрен килле кĕрсе алла мĕн лекнĕ çавна — тумтирсене, урана тăхăнмаллисене, апат-çимĕçсене сĕтĕре-сĕтĕре тухнă. Яла çаратса пĕтерсен, бандитсем 9 çурта çунтарса янă, çуртсемпе пĕрле хĕрарăмсемпе старихсем тата ачасем 20 çын çунса кайнă.

Палачсем Пелагея Семеновна Политаевăна унăн 4 ачипе пĕрлех персе пăрахнă. Фашистсем унăн килĕнче темиçе патрон гильзи тупнă пулнă. Амăшĕпе пĕрле 7 çулти хĕрача — Валя, 5 çулти арçын ача — Геня, 3 çулти хĕрача—Люся тата пĕр çулти Маня пĕтнĕ.

Фашистла ирсĕрсем Кузьмин колхозникĕн арăмне Пелагея Ниловнăна тата унăн виçĕ ачине персе пăрахнă. Çак çемьене палачсем яла гитлеровецсем пырса кĕрсен Кузьмин вĕсене курас мар тесе вăрмана тухса кайнăшăн асаплантарса вĕлернĕ. Персе вĕлернисене пурне те фашистла тискер кайăксем пÿртре çунтарса янă.

Нимĕçсем 70 çулти А. А. Федотова, 68 çулти Т. К. Федотовăна тата 22 çулти Анна Федотовăна унăн 2 çулти ывăлĕпе, Анатолипе пĕрле, вĕсем партизансене çул кăтартса панă тесе, персе пăрахса вутта ывăтнă.

Фашистла мерзавецсем 50 çулти П. М. Лебедева гитлеровецсем кăтартса панă вырăна вăл икк-виçĕ минута хушши кая юлса çитнĕшĕн кăна персе пăрахса çунтарса янă.

В. М. Федотов колхозникĕн 5 çынран тăракан çемьине фашистсем чĕрĕллех çунтарса янă.

Фашистла çынçиенсем хăйсен çавтери тискер ĕçĕсемшĕн питех те хаклă тÿлĕç-ха.

ХĔРЛĔ ÇАР БОЕЦĔСЕМ ВАЛЛИ ĂШĂ ТУМТИРСЕМ

КАНАШ, июлĕн 8-мĕш. **(«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа).** Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе çипуçсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен хулари комисси (председателĕ ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ А. Данилов юлташ) июнĕн 20-мĕшĕпе июлĕн 5-мĕшĕ хушшинче нумай япала пухнă. Пухнă япаласем хушшинче çаксем пур: тирсем—48 штука, кăçатăсем — 132 мăшăр, çăм алшишсемпе тир алсасем — 104 мăшăр, курткăсем — 6, свитерсем — 186, кĕпесем — 25, çăм — 50 килограмм тата ытти те.

Халĕ «Авангард» промартель çумĕнче тир тăвакан мастерской уçнă. Унта кĕрĕк-пиншаксем çĕлемешкĕн тирсем тума тытăннă.

Ăшă тумтирсемпе çипуçсем пухас ĕçре коммунистсем пример кăтартса пыраççĕ. ВКП(б) хула комитетĕнче ĕçлекенсем пĕрер мăшăр çăматă, свитерсем параççĕ.

Хулари учрежденисемпе предприятисенчи комиссисенчен уйрăмах çаксем лайăх ĕçлеççĕ: «Авангард» промартель çумĕнчи комисси (правлени председателĕ А. Васильев), 2-мĕш номерлĕ вăтам шкул çумĕнчи комисси (шкул директорĕ С. Иванова) тата Е. Овчинникова ертсе пыракан комисси лайăх ĕçлет. «Авангард» промартелĕн коллективĕ 15 мăшăр кăçатă, 20 тир тата свитерсемпе кĕпе-йĕмсем панă. Сăкăр заводĕн коллективĕ 6 мăшăр çăматă, 2 тÿшек ситти, 500 тенкĕ укçан панă т. ыт. те.

Хулари килхуçи арăмĕсем хушшинче 2.000 тенкĕ укçа пухнă. Вĕсемпе халĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне яма ăшă япаласем илеççĕ. Ăшă япаласем ытларах пухас тĕлĕшпе урам комитечĕсен председателĕсем хушшинче ăмăрту пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

* * *

ЕТĔРНЕ, июлĕн 7-мĕш. **(Телефонпа).** Районри «11 лет Октября» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса хатĕрлеме тытăннă. Колхозниксем çак патриотизмла ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Çак кунсенче вĕсем фронтри боецсем валли 10 тир, 2 мăшăр алшиш, 2 килограмм ытла çăм, 4 метр пир пухса пачĕç.

А. КРАСНОВ.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана 181 процент тултарнă

ИШЛЕЙ, июлĕн 7-мĕш. **(Телефонпа).** **Мамăш ялсоветĕ паянхи куна укçа-тенкĕ пухас ĕçĕн иккĕмĕш кварталти планне 181 процент тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре налоговой агент Серафима Смирнова лайăх ĕçлет.**

«Коммунист» тата «17-мĕш партсъезд» колхозсем 1942 çулхи тупăш налогне пĕтĕмпех тÿлесе татрĕç. Ку колхозсем 1943 çулшăн страховка укçине те срокченех пĕрер пин тенкĕ тÿлерĕç.

Халĕ ялсовет исполкомĕ çĕнĕ ялхуçалăх налогне шутласа хума тытăннă. Ялсоветĕнчи чылай колхозниксем çĕнĕ ялхуçалăх налогне аванс шучĕпе тÿлеме тытăнчĕç. Паянхи куна çавăн пек 2.000 тенкĕ тÿленĕ те **ĕнтĕ. Антон** Петров, Кирилл Федоров, Илья Артемьев колхозниксем («Коммунист» колхозран) çĕнĕ налог шучĕпе 200-шер тенкĕ аванс хучĕç. Çавăн пекех Кузьма Романов, Николай Пугачев, Прокопий Филиппов колхозниксем те («17-мĕш партсъезд» колхозран) çĕнĕ ялхуçалăх çулĕн налогне тÿлеме 200—300-шер тенкĕ пачĕç. Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ 280 тенкĕ, Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕ Степан Петровский 300 тенкĕ пачĕç.

П. РЫКОВ.
Мамăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Виççĕмĕш пилĕкçуллăх заемĕн (тăваттăмĕш çулхи кăларăмăн) пĕрремĕш тиражĕ

Июлĕн 5-мĕшпе 6-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш пилĕкçуллăх заемăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăмăн) пĕрремĕш тиражĕ пулса иртнĕ.

Пысăк выигрышсене заемăн выляса илекен кăларăмĕн 70 разрядĕнчи çакăн пек серисемпе облигацисем выляса илнĕ: 3.000-шер тенкĕлĕх выигрыша—116.682-мĕш номерлĕ серин 30-мĕш номерлĕ облигацийĕ; 1.000-шер тенкĕлĕххисене—110.806-мĕш номерлĕ серин 30-мĕш номерлĕ облигацийĕ; 110.836-мĕш номерлĕ серин 03-мĕш номерлĕ облигацийĕ; 113.406-мĕш номерлĕ серин 05-мĕш номерлĕ облигацийĕ т. ыт. те. (ТАСС).

СПЕЦИАЛЬНĂЙ ÇАР ШКУЛĔСЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛНИ

Мускавра хулари çутĕçпайĕ специальнăй çар шкулĕсене вĕренме илме пуçланă. Тинĕс-çар шкулĕсене, сывлăш-çар шкулĕсене тата артиллери шкулĕсене вĕренме кĕме çĕршер заявлени панă. Заявлени панă çамрăксенчен нумайĕшне медицина комиссийĕсем пăхса тухнă.

ÇĔРШЫВĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Кубанĕн кăнтăрти районĕсенче пур çĕрте те тенĕ пекех кĕрхи урпа вырма тытăннă. Туллимар даннăйсем тăрăх, 1.000 гектар ытла вырнă та ĕнтĕ.

Хатĕрлев пункчĕсене çĕнĕ тырă куллен ех пырса тăрать.

Чкалов облаçĕнчи хуласенчен темиçе пин çын колхозсемпе совхозсене утă çулма тата çум çумлама пулăшма тухса кайнă. (ТАСС).

Машинăсемпе инвентарьсем хатĕр

ЭЛĔК. Мăн Тукташри Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленет. Уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе Е. Кузнецовпа Морозов тимĕрçĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем ку таранччен 5 жнейка юсарĕç тата 113 çава туптаса пачĕç.

Колхозра урапа тукунĕсем авакан мастерской ĕçлет. Унта ĕçлекен Г. Осипов (мастерской заведующийĕ) тата Ф. Ивановпа Ф. Смирнов юлташсем кĕске вăхăт хушшинчех колхоза 30 тукун авса пачĕç.

Колхоз урапа сĕрмелли япаласене те çителĕклĕ хатĕрленĕ: 900 килограмм тикĕт, 200 килограмм машина çăвĕ кÿрсе килнĕ

М. КУСТИКОВ.

РЕСПУБЛИКĂН УИХИРĔСЕНЧЕ

Тракторӑстсен бригадинче дисциплина япăх

ÇĔРПУ. Гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă обстановкинче машинно-тракторнăй станцисенчи тракторсемпе ялхуçалăх ĕçĕнче туллин усă курасси тата горючипе сĕрмелли материалсене перекетлĕн тыткаласси питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Анчах та Çĕрпўри машинно-тракторнăй станцин 11-мĕш тракторнăй бригадинчи (бригадирĕ Петр Васильев) трактористсем хăйсен умĕнчи пысăк та ответлă ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Кăçалхи çул 11-мĕш бригадăри трактористсен, МТС планĕ тăрăх, «Союз», «Пучах» тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсене çĕртме сухи туса памаллаччĕ. Бригада нихăш колхозра та йĕркеллĕн ĕçлемерĕ. Сăмахран, «Пучах» колхозра договор тăрăх 80 гектар çĕртме сухи тумалла пулнă. Ку колхозра июнĕн 20-мĕшĕнче ĕçе тытăнса, июнĕн 26-мĕшĕнчен вунă тракторпа 3-шер смена ĕçлесе те 28 гектар çеç сухаларĕç. Трактористсем тракторсемпе ответлăха туйса ĕçлеменнине пула машинăсем час-часах ванса ĕçлемесĕр ларчĕç. Ĕçĕн пахалăхĕ ытла та начар. Июнĕн 23-мĕшĕнче (каçхи сменăра) 2 гектар çĕре шырлăхсем хăварса сухаланă. 28 гектар сухаласа çакăнта горючине планпа пăхнинчен 200 килограмм ытлашши расходланă. Çавăн пекех сĕрмелли материала та перекетлĕ тытмаççĕ.

Трактористсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемен. Вĕсем хаçат-журналсем илсе вуламаççĕ, кану вăхăтне усăсăр ирттереççĕ. Горючипе сĕрмелли материалсене перекетлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çак çулти июнĕн 20-мĕшĕнче йышăннă постановление трактористсем хушшинче сўтсе явман.

Трактористсен ĕçре дисциплина япăх вырăнта тăнине уйрăмах паллă тумалла. Ку вăл чи малтан бригадир трактористсене ертсе пыманнинчен килет. Васильев юлташ трактористсем патне (ĕçленĕ çĕре) ўсĕр тухнисем час-часах пулкаланă. «Сирĕн колхоз правленийĕ пире эрех-сăра ĕçтермест, эпир унсăрăн ĕçлеме пултараймастпăр» тесе, Васильев çĕртме сухине договорпа пăхнă чухлĕ сухаламасăрах колхозăн уйхирĕнчен тракторсене илсе кайтарчĕ.

Трактористсен ĕçри ответлăх çукки тата вĕсен ĕçре дисциплина начарри çинчен МТС-ăн работникĕсене пĕлтернĕ. Анчах вĕсем енчен айăплисене ответ тыттарасси те, ĕçе йĕркелеме пулăшу пани те пулмарĕ.

Трактористсен айăпне пулах «Союз» тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсен çĕртме сухи тăвас ĕç вăраха кайрĕ.

М. ЯКОВЛЕВ.

ÇИЛОС ХЫВАÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Уйрăм колхозсем силос хывас ĕçе йĕркеллĕн туса пыраççĕ. Чăваш Улхашри «Искра» колхозăн (председателĕ Шишкин юлташ) план тăрăх кăçал 150 тонна силос хывмалла, ку таранччен вăл 250 тонна хывнă. Силос хывас ĕçе «Подборное» тата «1-ое мая» колхозсем те вĕçлерĕç.

Анчах хăшпĕр колхозсенче ку ĕç çителĕксĕр пырать. Сăмахран, «Лесной огонек», «Красный Атмал», «Красный пахарь» колхозсенче силос шăтăкĕсене те чавма тытăнман. Ку вăл пĕтĕмпех колхоз председателĕсем ĕç çине кирлĕ пек пăхманнинчен килет.

* * *

ЭЛĔК. Ехремкасси ялсоветне кĕрекен «Майăн 1-мĕш» колхозра обществăллă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç йĕркеллĕ пулса пырать. Выльăх апачĕ çителĕклĕ таран хатĕрлес тесе, колхозниксем июнĕн 27-мĕшĕнче 10 тонна силос хыврĕç.

М. КУСТИКОВ.

Обязательствăсене пурнăçлаççĕ

ÇĔРПУ. Иваново ялсоветне кĕрекен «Луч» колхоз государствăна сĕт-çу парас обязательствăна пĕтĕмпех пурнăçларĕ. «Ударник» колхоз аш-какай обязательствине 75 процент пурнăçланă тата 3.140 литр сĕт парса çулталăкри нормăна 93 процент тултарнă. «Совет» колхоз çак кунсенче государствăна 480 пăт тĕштырă панă.

М. СМЕТАНИН.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Бобылькассинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пырать. Государствăна кăçалхи çулшăн аш-какай парса татнă, 1943 çулшăн та 2 центнер панă. Çавăн пекех «Урожай» колхоз та кăçал памалли аш-какай обязательствине парса татнă.

М. СТЕПАНОВА.

Самолетсен звенине тума укçа-тенкĕ малалла пухар

Ишлей районĕнчи çамрăк хĕрарăмсем-осоавиахимовецсем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине Елчĕк районĕнчи ĕççыннисем хапăл туса йышăнчĕç. Чĕнсе калани пичетленсе тухнă хыççăн, ăна колхозниксем, рабочисемпе служащисем хăйсен пухăвĕсенче сўтсе яврĕç.

Июлĕн 5-мĕш тĕлне районĕпе самолетсен звенине тума 50 пин тенкĕ ытла пухса панă. Çак ĕçе партипе комсомол пуçламĕш организацийĕсем пуçарса ертсе пынă çĕрте укçа пухас ĕç те лайăх пырать. Сăмахран, Пушкин ячĕпе тăракан колхозра Калля тата Можаева комсомолец-агитаторсем çакăн çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарнă. Çавăн хыççăн, колхозниксем самолетсем тума 2000 тенкĕ пухса панă. Каркалар ялсоветĕнче самолетсен звенине тума 7.724 тенкĕ пухнă. Ку ĕçе агитколлектив руководителĕ Т. Смирнова юлташ ертсе пырать. Çав ялсоветне кĕрекен «Петровка» колхозри агитатор Ольга Беляева 1445 тенкĕ пухса хывнă.

Дзержинский ячĕпе тăракан, «Красный воин», «Кзыл Элем», Максим Горький ячĕпе тăракан, «Осоавиахим», «Марс» колхозсенче те самолетсем валли укçа пухас ĕç аван пырать. «Кзыл Элем» колхозра красноармеец арăмĕсем Ахметова, Вахитова, Хасьянова юлташсем, кашниех 60-шар тенкĕ укçа парса, çапла каланă: «Пирĕн чи хаяр тăшмана — фашизма 1942 çулта тĕп-пипех аркатса тăкма тăван Хĕрлĕ Çара пулăшар», тенĕ.

МТС-ра ĕçлекенсем те укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем 1.110 тенкĕ пухнă. Коммунистсем Яшин тата Кудрявцев, комсомолка Карсакова юлташсем 100-шер тенкĕ панă.

Çакăнпа пĕрлех чылай колхозсенче çак пархатарлă ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Хăшпĕр çĕрте комсомол организацийĕсем хăйсем те çак ĕçе хутшăнман. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезд валли 13 пин тенкĕ ытла пухса панăччĕ. Анчах самолетсен звенине тума пĕр пус та пухман-ха. Унти комсомол организацийĕ ку енĕпе нимĕн те туман. «Октябрь», «Ново-Чурино», «Пахарь» колхозсенче те ĕç çавнашкалах тăрать. «Малалла» колхозра çак пуçарăва пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă. Колхоз председателĕ Большаков 10 тенкĕ, бригадирсем Можаевпа Степанов пĕрер тенкĕ панă! Ку вăл колхоз руководителĕсене пĕре те килĕшўллĕ мар.

Самолетсен звенине тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсен ытларах ĕçлес пулать.

И. ВАСИЛЬЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Заводра мĕншĕн парторганизаци çук?

Елчĕк районĕнче промышленность предприятийĕсем пур: крахмал завочĕ, механически арман, столярнăй мастерской. Вĕсенче яланах ĕçлекен рабочисем вуншарăн шутланаççĕ. Крахмал завочĕ ĕçленĕ сезон вăхăтĕнче унта 75 çын пулать, ытти чухне пĕрмаях 32 çын ĕçлет. Вĕсен шутĕнче пĕр коммунист пур. Ку цифрăсенчен ĕнтĕ рабочисем хушшинче куллен ĕçлесе пырса заводра партин пуçламĕш организацине тума май пурри уççăнах курăнать.

Анчах, калас пулать, ВКП(б) Елчĕк райкомĕ, крахмал заводĕнчи рабочисене политикăллă воспитани парас ĕçе вăйлатса, унти рабочисене парти ретне кĕме пулăшса, пуçламĕш парторганизаци организацилесси çинчен сахал шухăшланă. Кăçал рабочисем хушшинче икĕ хут кăна политикăллă калаçусем ирттернĕ: пĕрине — райкомăн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ Романов, теприне — пропагандист Крылова юлташсем. Урăх кунта политикăллă калаçусем ирттерни пулман. Унтан та ытларах, заводра хаçат вуласа паракансене те уйăрман.

Заводра пуçламĕш парторганизаци тăвасси çинчен калаçнă чухне ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Волков юлташ:

— Завода ĕçлеме коммунистсене ярса, унта пуçламĕш парторганизаци тумалла пулать, — тесе калать. Рабочисем хушшинче ытларах ĕçлесе, вĕсен политикăллă ăнланулăхне ўстерсе пырассине, çапла вара вĕсене парти ретне кĕме пулăшассине вăл асра тытмасть.

П. ДУБРОВИН.

Мельник-двухсотник

«Эпĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хамăн ĕç тухăçлăхне тата ĕç пахалăхне икĕ хут ытла ўстеретĕп, двухсотниксен ретне тăратăп», — тенĕ Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозри шыв арманĕнче ĕçлекен мельник Андрей Сидоров, хăй çине обязательствăсем илсе.

Каçпа та, кăнтăрла та кашлать Мăн Çавал çинчи вешник, пĕрмаях халтăртатать арман кĕлечĕ, сулăмлăн çавăрнаççĕ арманăн чулĕсем. Унта хăйĕн ĕçне хăнăхнă, опытлă мельник Андрей Сидоров пĕр чарăнмасăр ĕçлет.

Сидоров юлташ хăй çине обязательство илнĕ хыççăн ĕç тухăçлăхĕпе ĕç пахалăхне чылай ўстерчĕ. Мĕн чухлĕ лав пырса тăмасть пуль шыв арманĕ умне, мĕн чухлĕ михĕ вармасть пуль арманта! Вĕсене пурне те Сидоров авăртать. Арман пĕр чарăнмасăр, хăвăрт ĕçлет. Унăн мельникĕ Сидоров колхозсене пысăк пахалăхлă çăнăх туса парать.

Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз шыв арманĕнчен июнь уйăхĕнче кĕна 35.500 тенкĕ тупăш илнĕ. Мельник Андрей Сидоров двухсотниксен малти ретĕнче. Двухсотник-мельник ячĕ унăн ĕçлес кăмăлне татах та хĕпартать.

Г. МАТВЕЕВ.

Калинин районĕ.

Тупăш налогне парса татнă

ИШЛЕЙ. Мамăш ялсоветне кĕрекен «17-й партсъезд» колхозри колхозниксем государство умĕнчи 1942 çулти обязательствăсене вăхăтра парса татма тăрăшаççĕ. Колхоз 1942 çулшăн государствăна 28 центнер тырă, 1.067 килограмм аш-какай, 1.590 штука çăмарта пачĕ. Çăмарта тата аш-какай обязательствисене колхоз 1942 çулшăн пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Колхоз та, колхозниксем те тупăш налогне ытлашшипех парса татнă.

Н. ПУГАЧЕВ.

Египетри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 6-мĕшĕнче Англи вăйĕсем противника малалла хĕссе пынă, противник хăйĕн кăнтăр енчи флангне хĕвеланăçнелле куçарнă. Бомбăсене пуринчен ытла Эд-Даба районĕнчи самолетсем лармалли площадкăсем çине пăрахнă. Тобрукпа Мерса-Матрух хушшинчи районра противникăн транспорт колонни çине бомбăсем пăрахнă, пушарсем тухнă.

Англи истребителĕсем, Англин çĕр çинчи вăйĕсене хўтĕлесе пырса, тăшманăн нумай самолетне сиенленĕ. Англипе Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем кăнтăрла Бенгази çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем противникăн суднисем çине тўрех ўкнине палăртнă. Пушарсем тухнă.

Рейтер агентстви каланă тăрăх, Роммелĕн вăйĕсем халь хĕскĕч ăшĕнче тăнă пек тăраççĕ: пĕр енче Англин çирĕплетнĕ позицийĕсем выртаççĕ, фланг енче — союзниксен бронетанковăй вăйĕсемпе артиллери тăраççĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнче ирхине союзниксен колоннисем Роммелĕн Эль-Аламейнран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пуçтаранса тăнă çарĕн хыçĕнче çурçĕр еннелле куçма тытăннă. Хальхи вăхăтра вĕсем Эль-Аламейнпа Эд-Даба хушшинче тăраççĕ.

Союзниксен бронетанковăй вăйĕсем кунран-кун ўссе пыраççĕ. Роммелĕн вăйĕсем Эль-Аламейнран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри туллă икĕ кряж çинче оборонăллă позицисем йышăнса тăраççĕ.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июлĕн 6-мĕшĕнче каçхине противникăн самолечĕсем Англин çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕсем çине вĕçсе пынă. Вĕсем пĕр сехете яхăн вĕçсе çўренĕ.

Противникăн авиацийĕ тата Кăнтăр Уэльс çинче те вĕçкеленĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Вельфастран пĕлтернĕ тăрăх, противникăн самолечĕсем Çурçĕр Ирландин çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Вĕсем кўнĕ сиен пысăк мар.

ФРАНЦИ РАБОЧИЙĔСЕМ ГИТЛЕРЛА КАТОРГĂРАН ТАРСА КАЯÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви Франците пухса Германие янă рабочисем Германирен йышлăн тарни çинчен пĕлтерет. Лондона пырса çитнĕ рабочисем Германире вĕсем калама çук йывăр условисенче пурăнса ĕçлени çинчен каласа параççĕ. Германин пĕр заводĕнчен тарса килнĕ хĕрарăм çапла каласа парать: «Эпĕ ĕçлеме договор тăрăх 6 уйăхлăха кайрăм. Çак срок иртсен унтан каясшăнччĕ, анчах мана ямарĕç. Германие пухса янă вăхăтра пире шалу нумай тўлеме пулнăччĕ, Францие атте-аннесем патне укçа ярса пама ирĕк пама пулнăччĕ, чипер апат çитерме пулнăччĕ т. ыт. те. Чăннипе эпĕ кунне 23 марка илсе тăтăм, 18 марка апата каятчĕ, 2 маркăна эпĕ пĕр çуртра выртса çывăрса пурăннăшăн тўлесе тăтăм».

Руртан тарса килнĕ мастер çапла çырать: Германие кайнă чухне эпĕ договор турăм, договорне нимĕç чĕлхипе çырнипе эпĕ ăна нимĕн те ăнланаймарăм. Унтан çакă паллă пулса тăчĕ: ĕçукçин тăваттăмĕш пайне ăна çав договора тепĕр срока тăсассăн çеç тўлеççĕ иккен.

Пирĕн апат,—тесе çырать мастер,—тыткăнри çынсен апатĕнчен нимĕнпе те уйăрălса тăмасчĕ: 8 куна 2 кило çăкăр паратчĕç тата эрнере виçĕ хут юрăхсăр темиçе сосиска паратчĕç. Кун йĕрки çакăн пекчĕ: ирхине 4 сехетре тăраттăмăр, 5 сехетре ĕçе каяттăмăр, 19 сехет таран ĕçлеттĕмĕр. Эпĕ Руртан тарса килтĕм те хам ĕçленĕ завода пытăм. Мана çапла каларĕç: «Эсĕ Германире ĕçлеме кĕрĕшнĕ пирки эпир сана Германи подданнăйĕ тесе шутлатпăр. Пирĕн сан валли ĕç çук», терĕç. Манăн вара Францирен тухса каймалла пулчĕ.

Финляндин снабжени министрне вырăнтан кăларни

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Финляндин снабжени министрне Аролăна вырăнтан кăларнă, вăл халь правительствăран тухнă. Арола вырăнне Рамсайа лартнă.

Аролăна вырăнтан кăларни Финляндире продовольстви йывăрлăхĕсем çивĕчленсе кайнипе сыхăнса тăрать. Швецире тухакан «Базенс Нюхетер» хаçат çапла çырать: «Аролăна вырăнтан кăларни тĕлĕнтерсе ямарĕ. Укçа-тенкĕ министрне улăштарнипе пĕрле снабжени министерствинче те, çĕршывра продовольстви ĕçĕ начар пулса пынă пирки, улшăнусем пулмаллине пурте кĕтсе тăнă.

«Суомен сосиалидемократти» хаçат çакна кăтартса парать: «Финлянди ялхуçалăхĕ, чи лайăх тесен те, продуктсем çĕршыва кирлин 60—70 процентчĕ таран çеç пама пултарать».

Чан Кай-ши Китай çарĕпе халăхне чĕнсе калани

ЧУНЦИН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Японипе Китай хушшинчи вăрçă пуçланнăранпа 5 çул тултарнă май Чан Кай-ши Китай çарĕпе халăхне чĕнсе каланă. «Захватчиксене хирĕç пыракан вăрçă 5 çул тултарнă кун, — тенĕ Чан Кай-ши, — тăван çĕршывшăн геройла кĕрешсе вилнĕ Китай çарĕн боецĕсемпе Китай гражданĕсене пирĕн тивĕçлипе асăнмалла. Паянхи паллă кунпа усă курса, эпĕ, Китай çарĕн тата пирĕн çĕршыври халăхсен ячĕпе, пирĕнпе пĕрле çапăçакан союзлă çĕршывсен боецĕсемпе командирĕсене вĕсен çапăçури çитĕнĕвĕсемшĕн, çавăн пекех тата Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен, Англин, Совет Союзĕн, Австралин, Голландин, Канадăн, Чехословакин, Индин, Польшăн тата ытти çĕршывсен правительствисемпе обществăллă организацийĕсене вĕсем Китай кунçулĕшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшнăшăн тав тăвас тетĕп».

«Пирĕн кĕрешў, — тенĕ малалла Чан Кай-ши, — вăрăм вăхăт хушши пынипе кăна мар паларса тăрать, вăл çав вăхăтрах çавтери нумай асаплă, вăйсăрри вăйлине хирĕç туса пыракан танмар та йывăр, геройла кĕрешў пулса тăрать. Çав хаяр кĕрешĕве Китай халăхĕ çирĕппĕн тўссе ирттерни Китай нацийĕн никама пăхăнман традициллĕ аслă вăйхăватне малалла илсе пыракансем эпир пулса тăнине кăтартса парать. Агрессорсене хирĕç пыракан пĕтĕм тĕнчери кĕрешўре эпир малта тăратпăр кăна мар, çавăн пекех эпир мĕнпур этемлĕхшĕн тĕрĕслĕх принципĕсене туса çирĕплетес ĕçре шанчăклă вăй пулса тăратпăр, никам çĕнтерейми вăй-хăватăн символĕ пулса тăратпăр. Пирĕн вăрçă—ырăпа усал хушшинчи кĕрешў, тĕрĕслĕхпе тискер вăй хушшинчи кĕрешў.

Вăрçăн 5 çулĕ хушшинче, вĕçĕ-хĕрри сĕр асапсемпе йывăрлăхсем пулнине пăхмасăрах, эпир Китай халăхĕн революциллĕ хăвачĕ никамран хăраман çирĕп вăй-хăват пулнине кăтартса патăмăр, çав вăй хăват мĕнпур пек чăрмавсемпе йывăрлăхсене те çĕнтерет. Китай çĕршывĕ паян пĕччен мар, çакă вăл пире татах та пысăкрах ответлăх кўрет. Хамăрăн çарпа халăха, вĕсем тĕнчери вăрçă ответлăхĕн пирĕн çине ўкекен мĕнпур йывăрăшне вĕçне çитиччченех ăнланса илччĕр тесе, чĕнсе калатăп эпĕ. Пирĕн яланах хатĕр тăмалла, татах та ĕçченрех пулмалла, хамăрăн умри задачăсен çуллĕшĕнче тăмалла. Китайăн ответлăхĕ çакăнта—унăн Ази континентĕнчи çинче тĕп вăйсен кĕрешĕвне пуçарса пымалла. Çавăн пекех Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсемпĕн те Лăпкă океан çинче чи хăрушă тăшман Япони пулса тăрать, çакă ĕнтĕ Америкăна чи малтан Японие пĕтерсе тăкма хушать. Союзлă ытти çĕршывсем, сăмахран, Англипе ССР Союзĕ урăх çĕрте вăрçаççĕ, вĕсем унти кĕрешĕвĕн ответлăхне хăйсем çинче тытаççĕ».

Чан Кай-ши малалла çапла каланă: японецсем малтанхи ăнăçусене хăйсен чăн-чăн вăйне пула мар, çавнашкал обстоятельствăсем килсе тухнине пула турĕç. Мидуэй утравĕ патĕнче, Коралл тинĕсĕ çинче тата Датч-Харбор патĕнче пулса иртнĕ юлашки операцисенче японецсен ĕçĕсем питех те ăнăçсăр пулчĕç, çавна пула вĕсем çĕнĕ йышши 6 авианосецпа тăваттăшне тата 2 линкорне çухатрĕç. Тинĕс çинче японецсен ĕçĕсем ăнăçсăр пулни вĕсен вăйĕсем чи çўллĕ виçене хăпарса çитсе ўкме тытăннине пĕлтерет.

Малалла Чан Кай-ши çапла шантарса каланă: çывăх вăхăтсенчех японецсен çĕнĕ ăнăçсăрлăхсем тўсме лекĕ, çакă вара вĕсене пĕтесси патне илсе çитерĕ. Чан Кай-ши çакна кăтартса панă: Японин тинĕс-çар флочĕ тўснĕ çухатусем японецсене пиншер мильăллă тинĕс талккишĕсенче малашне ăнăçлă операцисем тума пысăк чăрмавсем кўреççĕ. Çав вăхăтрах союзлă çĕршывсен тинĕс çинчи, типĕçĕрти тата сывлăшри вăйĕсем кунран кун ўссе пыраççĕ, вĕсем калех ĕнтĕ тĕнĕл держависен вăй хăватĕнчен иртсе каяççĕ. Кăçалхи хĕл тĕлне японецсен вăйĕсем, союзниксен вăйĕсемпе танлаштарсан, татах та ытларах хавшаççĕ. Японецсене эпир юлашки хут континент çинче вĕлермеллех пырса çапатпăр. Çавăнпа та ĕнтĕ японецсене Кăнтăрти тинĕссем çинче çапса аркатнине Япония тинĕсре пуçĕпех пĕтессин пуçламăшĕ тесе хакламалла. Континент çинче вĕсем ытларах та ытларах лачаканă путса пыраççĕ.

«Противник пĕтесси, — тенĕ юлашкинчен Чан Кай-ши, — вăхăт ыйтăвĕ кăна пулса тăрать. Пирĕн çĕршывăри мĕнпур çынсен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе пурнăça кĕртмелле, хамăрăн çĕршыва татăклă çĕнтерў, ĕмĕрлĕх мар тата никама пăхăнмалла мар пурнăç кўмелле».

Америкăри профсоюзсен членĕсем пĕтĕмпе çĕнтериччченех çапăçма хатĕр

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 4-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен никама пăхăнманлăхне уявласа ирттернĕ кун Детройтра йышăну (прием) пулнă, унта профсоюзсен руководителĕсем 100 çын пулнă. Промышленность предприятийĕсем валли панă радиопередачăра çаксем тухса каланă: Америка çарĕн генеральнăй штабĕн снабжени пайĕн руководителĕ генерал-лейтенант Соммервелл, Америкăри ĕç федерацийĕн председателĕ Грин тата производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей тухса каланă. Соммервелл хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: тĕнĕл держависем профсоюзсене пур çĕрте те пĕтерсе лартаççĕ, вĕсем американецсене хăйсен тарçисем туса хурасшăн. Соммервелл çак вăрçăра çĕнтермешкĕн пĕрлĕхе çирĕплетсе пыма чĕннĕ.

Мэррей çапла каланă: производствăллă профсоюзсен конгресĕ тата Америкăри ĕç федерацийĕ çĕнтерў тумашкăн мĕн май килнĕ таранах килĕштерсе ĕçлĕç, тенĕ.

Грин хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Америкăри профсоюзсен членĕсем ку вăрçăра пĕтĕмпе çĕнтериччченех çапăçма хатĕр, тенĕ.

Великобританире еврейсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитетне тунă

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕнчи еврейсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ чĕннипе Лондонри еврейсем пысăк митинг тунă та Великобританири еврейсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитетне туса хунă. Вăл комитета чи паллă çынсем—обществăллă деятельсем, писательсем тата ученăйсем кĕреççĕ. Çав комитет Хĕрлĕ Çар валли танксемпе бомбардировщиксем тумашкăн халăх укçа пухма тытăнма тата Совет Союзĕнчи еврейсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕпе таччăн çыхăнма йышăннă.

Гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенче тимĕр-тăмăра ирĕксĕр йĕркепе пухни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Оверсис Ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, гитлерла влаçсем оккупациленĕ çĕршывсенче тимĕр-тăмăра ирĕксĕр йĕркепе пухаççĕ. Польшăра кашни хулана тата кашни яла тимĕр-тăмăр мĕн чухлĕ пухмаллине кăтартса панă. Пĕр-пĕр хулари е ялти халăх çав нормăна тултармасассăн, нимĕçсем вăл металла тупмашкăн çуртсене тата ытти хуралтăсене сўтеççĕ, трубасене ишсе антараççĕ, çăраççисене тата ытти япалсене пухса илеççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Çулпуç приказĕ

Сурхи аслати пек хăватлăн, хаяррăн
Сулпуçĕн приказĕ янрать:
— Кăçалах
Тăшманăн вăйне хуçмалла Хĕрлĕ Çарăн,
Ăна татăклах çĕмĕрсе тăкмалла!

Ку — аслă приказ.
Ку — закон. Сутă шанчăк.
Çĕршывăн сасси. Вăл хушни. Вăл чĕнни.
Ăна итлесе чĕрисем çулăмланчĕç
Çĕршыв ывăль-хĕрĕн, фронтри çар çыннин.

Ăна мĕнпур халăх чунран хапăлларĕ.
Хăй вăй-хăватне ĕненет вăл, шанать.
Приказ хушнине ырласа вăл каларĕ:
Çак çул çĕмĕрсе тăкмалла тăшмана!

Çĕкленчĕ çĕршыв тăрăх ăмăрту хумĕ.
— Фронт мĕн ыйтнине ытлăн-çитлĕн парар!
Фронтпа тыл ĕçлер алла-ал, çума-çумăн,
Ĕçпе те вутпа тăшмана çунтарар!

Тулли эшелонсем, васкаччăр пĕр вĕççĕр
Фронта кирлине вăхăтра çитерсе.
Пин-пин самолетсем тăшман çине вĕçчĕр,
Пиншерĕн танксем ыткăнччăр кĕрлесе.

Тек вăрçă турри — артиллери туй тутăр,
Ташлаччăр фрицсем вилĕмле ташшине.
Пĕр фриц та пирĕн çĕр çинче кун ан куртăр,
Вилĕм çитсе çаптăр кунта кашнинех.

Тăшман çĕр шырарĕ?
Туянтăр виç аршăн!
Вăл юншăн? — чыхлантăр хăй юнĕ çинче!
Эпир çапăçатпăр чура пулас маршăн,
Телейлĕ пуласшăн тăван çĕр çинче.

Кунсем йывăр килчĕç. Хаяр çапăçуллă
Анчах пирĕн лозунг халь:
Анăçалла!
Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх иккĕмĕш çулăн
Пире çĕнтерў кўрен çул пулмалла!

Пĕр çавăншăн çапăç, ĕçле,
Уншăн пурăн.
Пулас çĕнтерўшĕн мĕнпур вăйна хур.
Хăвна хăв тĕпче:
Паян фронтшăн мĕн турăн?
Мĕн кирлĕ? Тата мĕн тумашкăн май пур?

Ĕçлер, çапăçар арăслан пек хаяррăн.
Чĕнў: Хĕвеланăçнелле! Малалла!
Çак çул тăшмана çĕнмелле Хĕрлĕ Çарăн.
Ăна пуçĕпех çĕмĕрсе тăкмалла!

УЙĂП МИШШИ.

Согласно ст. 12 закона о подоходном налоге с населения от 4 апреля 1940 года предприятия, учреждения и организации обязаны к 10 июля 1942 года представить в районные (городские) финансовые отделы.

отчет по форме № 47-а

об удержании с рабочих и служащих и приравненных к ним лиц подоходного налога и культсбора за II квартал 1942 года.

За несвоевременное представление рай(гор)финотделами отчетов (форма № 47-а) лица, ответственные за представление этих отчетов, подвергаются штрафу до 100 рублей.

Бланки отчета получить в рай(гор)финотделах.

Правила заполнения указаны на оборотной стороне отчета.

НАРКОМФИН ЧАССР.

ГОСЗВЕРИНЦУ

требуются: зав. хозяйством, служители у животных, кассиры и контролеры.

Требуется бухгалтер и счетовод. Обращаться: ул. Горького, 12, Союзутиль. Телефон 0-87.

МАКАРОННОЙ ФАБРИКЕ

срочно требуются на работу: механик, бухгалтер расчетного отдела, плановик-экономист, кочегары, слесаря и рабочие в цеха.

Обращаться по адресу: ул. Урицкого, № 29.

3 июля в г. Чебоксарах пропала лошадь. Гнедой масти, на лбу проточина. Знающих просим сообщить по адресу: Цивильский район, Перво-Степаново, колхоз «Союз».

АЛАТЫРСКИЙ ТЕХНИКУМ ЖЕЛ.-ДОР. ТРАНСПОРТА

и временно находящиеся при нем Днепропетровский, Славянский (Украина) и Великолукский (Калининская область) техникумы ж.-д. транспорта объявляют осенний прием в 1942 году учащихся по специальностям:

1) «Электрическая и газовая сварка»
2) «Паровозное хозяйство» — Алатырский техникум.
3) «Движение и грузовая работа» — Славянский и Днепропетровский техникумы.
4) «Паровозное хозяйство» и «Вагонное хозяйство» — Великолукский техникум.

В техникум принимаются лица обоего пола от 15 до 30 лет.

Окончившие в 1941—42 году среднюю школу или неполную среднюю школу принимаются без испытаний. Остальные подвергаются испытаниям согласно правилам приема в техникумы.

Срок обучения для окончивших 7 классов — 3 года, 8 и 9 классов — два с половиной года, 10 классов — 2 года.

Заявления принимаются с 25 мая по 25 августа. Начало занятий с 1 сентября.

Отличники учебы обеспечиваются стипендией.

Плата за обучение 150 руб. в год.

От платы за обучение освобождаются дети пенсионеров и призванных в ряды РККА.

Иногородним предоставляется общежитие.

Заявления подавать по адресу: г. Алатырь, ЧАССР, Первомайская ул., дом 50. Подробности почтой.

АДМИНИСТРАЦИЯ.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 176 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 348. [illegible]